**Йĕкĕрлĕ курка...**

Йĕкĕрлĕ курка - сар курка,
Хĕррипе тан пыл-сăра.
Ĕçес килсе ăш çунать,
Кам ĕçмешкĕн тав тăвать?

Курка курнать - хамăн мар,
Аллам çитет - ирĕк мар.
Йĕри-тавра ют çынсем,
Ăçта-ши ман тăвансем?

Курка ларать - сăйламасть,
Хĕвел пахать — ăшăтмасть,
Вĕрет хаяр сивĕ сил,
Ăçта-ши ман савнă кил?

Пыл-сăрана тутанма
Мăшăр-мăшăр лармалла.
Ман мăшăрăм мĕнле-ши?
Унăн ĕçес килет-ши?

*Шупуççынни, Н. Йĕкĕрлĕ курка : [сăвă] / Н. Шупуççынни // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 80.*